# Çĕнтерў ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

12 (7437) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи февралĕн (нарăс) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

### Пĕрлехи информаци кунĕнчен

## Малалла туртăнаканăн ыйтусем çуралаççĕ

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче чи малтанах республикăн иртнĕ çулхи аталанăвне тишкерни вырăнти ертўçĕсене те хăйсем ертсе пыракан коллективăн ĕçне пĕтĕмлетсе, малалла аталанмалли çул-йĕре шырама хистет. Ку чăннипех те çавăн пек пулса пынине Пĕрлехи информаци кунĕ те çирĕплетсе пачĕ. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн сĕт-çу ферминче те, пĕчĕккĕн пулин те, малаллах талпăнаççĕ. Иртнĕ çул кунта кадрсен ыйтăвĕ те питĕ çивĕч тăратчĕ. Паян кунта 23 çын ĕçлет. Вĕсем тăрăшни вара куç умĕнчех. Çак вăхăтра кашни ĕнерен вăтамран пĕлтĕр талăкра 6 килограмм сĕт сунă пулсан, паян кăтартăва 9 килограма çитернĕ. Ăна татах та ўстерес тесен вара, район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов палăртнă пек, пахалăхлă выльăх апачĕ хатĕрлемелле. Ку пĕрре. Çавăн пекех тухăçлă продукци илмелли тепĕр тĕп çула - фермăна реконструкцилесе çĕнĕ технологи çине куçасси те хăй çинчен шутламах хистет. Ун чухне ĕç укçи те паянхи шайра пулмĕччĕ. Электроэнергипе усă курнăшăн кăна, авă, уйăхне 46 пин тенкĕ тухса каять. Ял ĕçченĕсем паян Отарккă тăрăхĕнче те килти хушма хуçалăхпа ал-ура çавăрса яма тăрăшаççĕ. Ферма ĕçченĕсемпе иртнĕ тĕл пулура район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов вырăнта ял хуçалăх продукчĕсем вырнаçтарас енĕпе ĕçлекен ял хуçалăх кооперативĕ тăвас ыйтăва татсах памаллине палăртрĕ, мĕншĕн тесен юлашки вăхăтра сысна ашне вырнаçтарма кансĕртерех. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л. Г. Ковалева пĕлтернĕ тăрăх, ку ыйтупа вырăнта ĕçлес кăмăллă çынсем пурри палăрать. Çитменнине аш-какай комбинатĕнче килте пуснă выльăха туянасшăнах марри те курăнать. Апла пулсан çакă вырăнсенче тепĕр ыйтăва кун йĕркине кăлармалли пирки калать: пĕтĕм требованисене пăхăнса тăракан выльăх пусмалли пунктсем уçмалли çинчен. Отарккăсене çавăн пекех ял патне çул çукки, шыв ыйтăвĕ пăшăрхантарать. Юрий Александрович ку ыйтусем çине тулли хуравсем пачĕ.

Тўрех çакна каласа хăварам. Кашни тĕл пулурах район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ЧР Президенчĕн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕпе паллаштарнă май районăн иртнĕ çулхи аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Патшалăх ветеринари службин ертўçи В. К. Тихонов республикăн утăмĕсем çинче чарăнчĕ, çавăн пекех уртаракан чиртен, кайăк-кĕшĕк чирĕнчен сыхланмалли пирки те каларĕ.

Вырăнти лару-тăру ертўçĕрен нумай килнине кўршĕллĕ Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пулни тепĕр хут çирĕплетрĕ. Хуçалăх тилхепине тытнăранпа вăхăт нумаях иртмерĕ пулин те, П. Г. Ефимов пĕчĕк хуçалăха пысăк сулăнчăках лектересшĕн мар. Ĕне ферминчи пушă ларакан витене реконструкци туса çĕнĕ технологи çине куçас ĕмĕтпе пурăнаççĕ паян кунта. Çак шухăша пурнăçа кĕртме пуçланă ĕнтĕ. 320 пуç вырнаçмалăх пулас ĕне сумалли залра бригада ĕçлет. Пĕтĕмпе ăна туса пĕтерсе хута яма 18 миллион тенкĕ укçа кирлĕ, 13 миллионне илме документсем хатĕрлесе çитерессипе ĕçлеççĕ. Ĕç кайран чарăнса ан лартăр тесен, юлашки 5 миллионне тупас ыйту та шухăшлаттармасть мар.

– Çăмăл мар, анчах тусан пулать,– Павел Геннадьевичăн мал туртăмлăхĕ вăл пĕчĕк хуçалăхăн пĕчĕкех мар тепĕр проблемине те татса парасси пирки иккĕлентермест. Выльăхсен йышне ўстернĕçемĕн кĕтў çўретме те, выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрлеме те çĕр кирлĕ. Ку енĕпе те ертўçĕн палăртнă шухăшсем пур ĕнтĕ.

– Выльăх йышĕ пулсан, кукуруза акмах тивет, унран пахалăхлă силос пулать,– тет вăл.



Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх фермисенчи тасалăхпа тирпейлĕх чи малтанах кунта ертўçĕрен пуçласа кашни ĕçчен хăйĕн вырăнĕнче яваплăха туйса ĕçленине кăтартса парать. Сĕт чĕрĕ укçа кўрекен чи пирвайхи çăл куç пулнине кунта асра тытни куç кĕретех. Сĕт сивĕтмелли оборудовани илнĕрен вара асăннă хуçалăхра илнĕ сĕт пĕрремĕш сортпа каять. Юнашарах сĕт сумалли зал пулмалла. Ĕç укçи ку хуçалăхра районти вăтам кăтартуран пысăк, апла пулин те, район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов каланă пек, унăн шайне хăпартмалли майсем вĕсен çителĕклех. Ку вара çур акине епле ирттернинчен те нумай килет. Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче, тенĕ ĕлĕкех ватăсем. Паянхи кулленхи сăвăм (15 килограмм) вара кунта выльăх апачĕн пахалăхĕ япăх пулманни пирки те калать. Хуçалăх ура çинче çирĕп тăнăран пулĕ, кунта ĕçлекенсен ыйтусем пулмарĕç.

Шетмĕпуç тăрăхĕнче пурăнакансен вара чун кўтсех çитнĕ. Хуçалăх саланса кайнипе çыхăннăскер ытларах ыйтăвĕ те. Мĕн юлнă хуçалăхра? Мĕн сутса мĕнле парăма саплаштарнă? Мĕншĕн халăхран пытараççĕ çакна?

–Малтан хуçалăхпа пĕр çăвартан пурăнаттăмăр, кирлĕ чухне пулăшаттăмăр пĕр-пĕрне. Халĕ кашни хăйĕншĕн: хуçалăх ертўçи пĕрре шыва хупса лартать, тепре пăрăхне касса каять. Çăмăл мар кун пек лару-тăрура, – пăшăрханать шкул директорĕ.

Шыв ыйтăвне татса пама ыйтаççĕ вĕсем: шыв башнисене çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха панинче кураççĕ çăлăнăça. Кунта вара маларахри процедурăсене туса ирттерме те ял тăрăхĕн çинерех тăни кирлĕ.

Хумхантаракан ыйтусенчен тепри вăл - шкул картишĕнчи электричествăпа тивĕçтерекен подстанцине унăн чăн-чăн хуçи çине куçарасси. Ку тăрăхра пурăнакансене çавăн пекех Ишек пасарĕ вăхăтлăха хупăнни те канăç памасть. Килте туса илнĕ аша кунта вырнаçтарма хăнăхнăран. Хуçалăх саланнăран ĕç вырăнĕсем çукки те – паян та çивĕч ыйтусенчен пĕри. Ыйтусем çине хуравланă май Юрий Александрович ку енĕпе çакна палăртрĕ: хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацине строительсем кирли çинчен. Ĕç укçине те унта Мускава кайса ĕçленинчен каях илмеççĕ. Çемьепе пĕрле пурăнса ачапăчана мăшăрпа пĕрле çитĕнтернинчен ырри мĕн пултăр. Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров хăйĕн ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче те ачасем çине тимлĕх хытă уйăрмалли пирки калать. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов малалла шкул çулне çитмен ачасене вĕрентўпе воспитани витĕмĕсĕр хăвармалла маррине палăртрĕ. Çавăнпа та çак ўсĕмри ачасене пĕтĕмпех ача садне е вăхăтлăх пулмалли ушкăнсене вырнаçтарĕç.

Асăрхарăр пулĕ, татса паман ыйтусем пирĕн, çитĕннисен, тăп-туллиех. Çакă ял тăрăхĕсен кунĕсенче те, Пĕрлехи информаци кунĕнче те курăнчĕ. Вĕсене татса парас енĕпе районта ятарлă программа ĕçлĕ. Пĕрлехи информаци кунĕнче хускатнă ыйтусенчен чылайăшĕ шăпах унта кĕрет. Пĕрлехи информаци кунĕ хыççăн халăх хускатнă ыйтусенчен республика шайĕнче татса памаллисене палăртрĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕнче: Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем фермăри ĕçсемпе паллашаççĕ.**

### Çур акине кам епле хатĕрленет

## Алă усса ларма вăхăт çук

Çапла хуравларĕ çур акине хатĕрленес ĕçсем епле пынипе кăсăклансан “Ударник” сăнавлă производство хуçалăхĕн Вăрманкассинчи производство уйрăмĕн мехпаркĕнче хăйне шанса панă МТЗ-82 трактора юсассипе ĕçлекен Николай Валерианович Иванов хăй ĕçлекен трактора хуçалăх аталану утăмĕнчен юлманнишĕн 10 çул каялла ЧР Президенчĕн аллинчен илнине уйрăммăн палăртса.



– Алă усса ларма вăхăт çук. Çур аки паян вăл инçетре пек туйăнать, анчах пĕрре куç хупса илетĕн кăна, хире чĕнсе тўпере тăрисем юрлаççĕ. Çур акири паха вăхăта çухатсан вара... Çур акире эпĕ хамăн мĕн ĕçлемеллине пĕлетĕп ĕнтĕ: манăн вăхăтра тырă акса, çĕр улми лартса хăварма çĕр хатĕрлемелле. Ăна вара юсавлă техникăпа çеç пахалăхлă пурнăçлама пулать, – терĕ ĕçрен канса илнĕ хушăра Николай Валерианович хуçалăхăн тĕп инженерĕ Н. Николаев сĕнĕвĕсемпе паллашнă май **(пĕрремĕш сăн ўкерчĕкре)**.



Юсавлă техника паха ĕç никĕсĕ пулнине хуçалăхăн кашни уйрăмĕнчех пĕлсе ĕçлеççĕ. Пĕрлехи вăйпа юсавçăсемпе механизаторсен 3 сеялкăллă 7 агрегата, курăк акмалли 4 сеялкăна, 24 культиватора, 200 яхăн сўрене, çĕр улми лартмалли 5 сажалкăна ака-суха ĕçĕччен ĕçе хатĕрлесе çитермелле. Паян ку енпе кашни уйрăмрах ĕç пырать.

– Йăлтах хатĕр теейместпĕрха та, анчах çак тĕллевпе куллен ĕçлетпĕр, – калаçăва хутшăнчĕ хуçалăхри механизатор-водительсен вăйĕпе кĕркунне Панкли уйрăмĕнче, иртнĕ кунсенче Матьăк уйрăмĕнче 5-шер пин тонна ытла тислĕк хире кăларнине палăртса. – Халĕ хирсене çур аки валли улăмран тасатассипе ăна фермăсене выльăх-чĕрлĕх патне турттаратпăр.

Ĕçсем çур акине хатĕрленессипе тĕллевлĕ пынине кăтартакан пĕр ўкерчĕке куç хыçне хăвараймарăм. Михаил Андреев юсавçăпа Влас Иванов тата Иван Иванов механизаторсем **(иккĕмĕш сăн ўкерчĕк)** тĕп ĕçрен пушă вăхăтра ĕçлесе иртнĕ кунсенче сўресене ĕçе хатĕрлес ĕçе вĕçлерĕç. Паян вĕсем хăйсене шанса панă сеялка-культиваторсене ĕçе хатĕрлеççĕ.

Эпир пулнă кун кашни уйрăмрах техника юсассипе ĕçлени куç умне пулчĕ. Çĕр ĕçченĕ ыран акана тухмалла тесен тин техникăна юсама пуçламанни унăн чăн хресчен туйăмне уçса парать.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**районти патшалăх техника надзорĕн инженер-инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ, райхаçатăн ял хуçалăх пайĕн ертўçи.**
**А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕсем.**

### Республикăра

## Çамрăксене – Президентăн 1000 стипендийĕ

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров нарăсăн 5-мĕшĕнче пултарулăха туптакан республикăри çамрăксене ятарлă стипенди парасси çинчен калакан хушу çине алă пуснă. Вĕренўре, бизнес проекчĕ тăвас, ăслăлăхра, производствăра тата управлени ĕçĕ-хĕлĕнче пысăк ўсĕм тунă каччăсемпе хĕрсем кашни уйăхра 1000 тенкĕ илсе тăрĕç.

Чăваш Енре пурăнакан талантлă та социаллă хастар çамрăксене патшалăх пулăшăвĕ тата тĕллевĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ условисем туса пани – республика политикин чи пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕсенчен пĕри.

Президент стипендине пуçласа 1994 çулта панă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

### Уçă алăксен кунĕ

## Ўссен эсĕ кам пулан?

Шкултан вĕренсе тухсан ăçта вĕренме е ĕçleme каясси пурне те шухăшлаттарать тата хумхантарать. Ку тĕлĕшпе шкулта вĕреннĕ чухнех малашлăхри çул-йĕре палăртни ытлашши мар.

Февралĕн 8-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче уçă алăксен кунĕ иртрĕ. Район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов хальхи вăхăтра епле профессисем кирли, ăçта вĕренме каясси пирки чарăнса тăчĕ. Кунпа пĕрлех вăл çавна та палăртрĕ. Енчен те аслă вĕренў заведенийĕсемпе шкул ачисене вĕренме илессипе килĕшўсем тунă пулсан, ятарлă вăтам пĕлў паракан вĕрентў учрежденийĕсемпе кун пек килĕшўсене пачах та туман.

Район администрацийĕн экономика пайĕн ертўçи Э.И. Симакова районăн иртнĕ çулхи пурнăçпа экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ, пахалăхлă специалистсем яланах кирлине палăртрĕ. Çакă вăл районăн аталанăвĕпе тўрремĕнех çыхăннă. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр специалисчĕ И.Н. Димитриева ăçта вĕренме каяссин ыйтăвĕсем çинче чарăнчĕ.

Тĕл пулура Чăваш патшалăх педагогика колледжĕн, Шупашкарти 18-мĕш номерлĕ профессипе техника училищин, «Петровский» колледж, Вăрнарти 29-мĕш номерлĕ профессипе техника училищин представителĕсем тухса калаçрĕç, хăйсен вĕренў учрежденийĕсене вĕренме кĕмелли условисемпе паллаштарчĕç, ăнăçусем сунчĕç.

**Хамăр инф.**

## Конкурсра çĕнтерчĕç

Çулсеренех республикăра Чăваш Енти чи лайăх предприниматель” тата “Çулталăкри чи пултаруллă хĕрарăм–директор” конкурссем иртеççĕ. Пирĕн районтан та унта çулсеренех хутшăнаççĕ. Предпринимательсен конкурсне кăçал, акă, пиллĕкĕн кайрĕç. Кăçал вĕсем малти вырăнсенех йышăнаймарĕç пулсан та, çитес çула валли ку шанчăк юлать-ха.

“Çулталăкри чи пултаруллă хĕрарăм-директор” конкурсра вара пирĕн ытарайми маттур хĕрарăмсем пĕр çул та маххă паманччĕ-ха. Вулакансем астăваççĕ пулĕ, 2004 çулта асăннă конкурсра РФ Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕн управляющийĕ Х. М. Тимофеева “Характер вăйĕ”, виçĕмçул Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ Г. Г. Голубева “Пултарулăх çынни” номинацисенче çĕнтерўçĕсем пулса тăнăччĕ.

Иртнĕ çул вара пирĕн районтан харăсах иккĕн çĕнтерўçĕ пулса тăчĕç. Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валентина Алексеевна Любимова “ Пултаруллă хĕрарăм - ял тăрăхĕсен пуçлăхĕ” номинацинче çĕнтерчĕ. Муркашри “Визит” суту-илў çурчĕ” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ Лилия Валерьевна Николаева асăннă конкурсра “Чи шанчăклă партнер” номинацинче çĕнтерчĕ, Раççей шайĕнчи çак конкурса хутшăнма тивĕçрĕ. Март уйăхĕн пуçламăшĕнче Раççей шайĕнче иртекен конкурсăн программи те питĕ пуян. Çĕнтерўçĕ хĕрарăм-ертўçĕсем Пушкин балĕнче те пулаççĕ. Çавăнпа та паян Лилия Валерьевна çак вилĕмсĕр поэтăн шкулта вĕреннĕ произведенийĕсене те çĕнĕрен аса илет. Хитре бал кĕпи тăхăннипе пĕрлех Муркаш хĕрĕ сăвă вуланă чухне те ытти хăнасенчен ку хутĕнче те уйрăлса тăрасса, палăрасса шанатпăр, конкурсра ăнăçу сунатпăр.

Тата çакна та каласа хăвармалла. Нумаях пулмасть Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, “Чăваш Республикинчи хĕрарăмсен канашĕ” обществăлла организаци, “Чăваш Енти хĕрарăм-предприниматель ассоциацийĕ” регионти обществăлла организацийĕ республикăри “Çулталăкри чи пултаруллă хĕрарăм–директор” конкурса хутшăннисен каталогне кăларчĕ. Унта Харитина Мироновнапа Галина Георгиевна хушамачĕсене те асăннă. Иртнĕ çулхи çĕнтерўçĕсемпе Валентина Алексеевнапа, Лилия Валерьевнăпа тĕплĕн паллаштарнă.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Профилактика операцийĕ

## Юр çийĕн çўреме

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çўрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев январĕн 29-мĕшĕнче юр çийĕн çўрекен техникăна тĕрĕслеме, вĕсене регистраци тунине пăхса вĕсемпе усă курма ирĕк илнине пĕлме республикăра февралĕн 12 – 25-мĕшĕсенче “Снегоход” профилактика операцийĕ ирттерме приказ кăларнă. Районти патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕ çак вăхăтра тăтăш рейдсем ирттерĕ. Çавна май ĕç коллективĕсенче пулса асăннă операцин тĕллевĕсемпе паллаштарĕ, кивелнĕ мотохатĕрсене тупса палăртса регистрацирен кăларассипе ĕçсем пурнăçлĕ.

Иртнĕ çул республикăра çак операци вăхăтĕнче тĕрĕсленĕ техникăн 43,8 процентне çирĕплетнĕ йĕркепе регистрацилеменни, 33,3 проценчĕ техосмотр тăманни, 21 процентĕнче водительсем кирлĕ категориллĕ удостоверенисемсĕр пулни, 43,8 проценчĕ регистрациленĕ документсемсĕр эксплуатациленни, 40,3 проценчĕ патшалăх регистраци номерĕсемсĕр çўрени палăрнă. Кăçал çак çитменлĕхсене пĕтересси операцин тĕп тĕллевĕ пулать.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти пуçлăхĕ.**